25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ИЮЛЬ 14 ЫТЛАРИКУН 162(6097) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

СССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнче

1942 ҫулта тырпулсене пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлесси ҫинчен

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑ обстановкинче колхозсемпе совхозсем ҫураки туса ирттерес задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Ҫуркунне кая юлса килчӗ пулин те, колхозсемпе совхозсем тырпулсене иртнӗ ҫултинчен чылай кӗске срокра акса хӑварчӗҫ, тӗштырӑсем акмалли плана ирттерсе тултарса, тырпул пухса кӗртмелли ҫӗр лаптӑкне ӳстерчӗҫ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫапла йышӑннӑ:

Партипе совет организацисене, колхозсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене, политотделсен начальникӗсене ҫакӑн ҫине ҫавӑрӑнса пӑхма хушас: республикӑсенчи, крайсенчи, облаҫсемпе районсенчи, МТС-сенчи партипе совет организацийӗсем, совхозсемпе колхозсем тырпулсене пухса кӗрес тата государствӑна валли ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлес ӗҫе халех хатӗрленме тытӑнсассӑн тата ҫав ӗҫсем хӑйсем тӗллӗн пулса пырассине шанни пулмалла мар тусассӑн, тырпулсене пухса кӗмелли тата ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлемелли плана тултарасси те ҫураки пекех ӑнӑҫлӑн пулса иртме пултараҫҫӗ.

Совет тата парти организацийӗсене иртнӗ ҫулти йӑнӑшсене тепӗр хут тумалла марри ҫинчен асӑрхаттарас. Иртнӗ ҫулта чылай облаҫсенче, крайсемпе республикӑсенче тырпулсене пухса кӗртме начар хатӗрленнине пула вӑл ӗҫ питех те вӑраха кайрӗ, ҫакӑ вара тырпула тӑккаласа пӗтерессипатне, государствӑна тырпул парас ӗҫре законпа палӑртнӑ сроксене пӑсасси патне тата хатӗрлев пунктӗсене паракан тӗштыррӑн пахалӑхӗ начарланасси патне илсе пычӗ.

ССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитече ҫапла шутлаҫҫӗ: тырпулсене вӑхӑтра, ӑнӑҫлӑн пухса кӗртесси, государствӑн ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлемелли планне тултарасси—совет, парти тата комсомол организацийӗсен, колхозсен, МТС-сен, совхозсен тата тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе хутшӑнакан кашни ҫынӑн вӑрҫӑпа хуҫалӑх тӗлӗшӗнчи чи пысӑк задачисенчен пӗри пулса тӑрать, ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртни нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма пулӑшать.

Тырпулсене ӑнӑҫлӑн пухса кӗртес ӗҫӗн чи кирлӗ условийӗ вӑл—комбайнсене, тракторсене, тырпул пухса кӗмелли ытти машинӑсене вӑхӑтра хатӗрлени, тырпулсене пухса кӗнӗ вӑхӑтра вӗсем пӗр чарӑнусӑр ӗҫлени, тырпулсене пухса кӗрес ӗҫе колхозниксем, совхозсен рабочийӗсем пурте пӗр ҫын юлмиччен хутшӑнни, хуласенчи, яллӑ вырӑнсенчи ӗҫлеме пултаракан халӑха тата вӗренекенсене тырпул пухса кӗрес ӗҫе явӑҫтарни пулса тӑрать. Кунсӑр пуҫне тата, комбайнсемпе туллин усӑ курнипе пӗрлех, тырӑ вырас, капансем тӑвас, авӑн ҫапас ӗҫсенче ҫӑмӑл машинӑсемпе анлӑн усӑ курни тата алӑпа ӗҫлени, тырпула пухса кӗртес ӗҫре чӗрӗ туртӑм вӑйӗпе анлӑн усӑ курни кирлӗ.

СССР Наркомземне, СССР Наркомсовхозне, СССР Наркомпищепромне, СССР Нракоммясомолпромне, Наркомзага, облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен совнаркомӗсене, парти обкомӗсене, крайкомӗсене, союзлӑ республикӑсенчи компартисен Центральный Комитечӗсене, парти райкомӗсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене тата политотделсен начальникӗсене, ялсоветсен председателӗсемпе колхозсене ҫапла тума хушас:

I

Тырпулсене пухса кӗме хатӗрленес енӗпе

1. Кашни колхозра, совхозра тата МТС-ра тырпул пухса кӗртмелли ӗҫ планӗсем тумалла, ҫав плансенче ӗҫ вӑйне вырнаҫтарассине, комбайнсемпе, ҫӑмӑл машинӑсемпе, транспорт хатӗрӗсемпе, чӗрӗ туртӑм вӑйӗпе усӑ курассине палӑртмалла, ҫавӑн пекех тата тырпул пухса кӗрес ӗҫпе пӗр вӑхӑтрах килекен ытти уйхир ӗҫӗсене туса ирттерессине те палӑртса хумалла.

Тырпул пухса кӗмелли тата государствӑна паракан ялхуҫалӑх продукчӗсене турттармалли ӗҫ планӗсене колхозниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗсенче, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисемпе специалистсен тата служащисен производствӑллӑ канашлӑвӗсенче сӳтсе-явмалла, конкретнӑй заданисене кашни бригада, звено тата уборкӑра ӗҫлекен кашни агрегат патне ҫитермелле.

2. Уборка пуҫланиччен комбайнсемпе тракторсене, тырпул пухса кӗртмелли ҫӑмӑл машинӑсене, молотилкӑсемпе локомобильсене, автомашинӑсене тата алӑпа ӗҫлемелли ытти инвентаре пӗтӗмӗшпе юсаса хатӗрлесе ҫитермелле. Комбайнсем ҫумне зерноуловительсем, улӑма купаласа хӑваракан хатӗрсем тата вырттнӑ тырра пуҫтармалли хатӗрсем лартмалла. Хӗвелҫаврӑнӑш, вир, хуратул, рыжик, горчица, соя тата вӑрлӑх валли акнӑ курӑксене вырса, ҫапса пуҫтарма комбайнсемпе молотилкӑсене кирлӗ таран майлаштарса хатӗрлемелле.

3. Уборка вӑхӑтӗнче комбайнсемпе тракторсене пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеттермелле тӑвас шутпа кашни МТС-па совхозра кашни 10—15 комбайн пуҫне куҫса ҫӳрекен пӗр мастерской тумалла. Куҫса ҫӳрекен мастерскойсенче ӗҫлеме ремонт тӑвакан рабочисен квалификациллӗ кадрӗсене ҫирӗплетмелле тата вӗсене кирлӗ инструментсемпе запаслӑ пайсем кирлӗ таран парса тӑмалла. Комбайнсен кашни агрегатне пуринчен ытларах ҫийӗнсе пӗтекен запаслӑ пайсемпе материалсем тата комбайнсене уйхиртех техника тӗлӗшӗнчен пӑхса тухса юсама кирлӗ инструментсем памалла, ҫавӑн пекех тата заправка тумалли хатӗрсемпе пушартан сыхланмалли хатӗрсене те ҫителӗклӗ таранах памалла, комбайнсемпе тракторсен тата автомашинӑсен моторӗсем ҫумне хӗлхеме сӳнтерекен хатӗрсем лартмалла.

4. Юсанӑ кашни комбайнпа трактора уборка пуҫланиччен 10 кун маларах МТС тата совхоз директорӗн тата политотдел начальникӗн хӑйсен йышӑнмалла, ҫак ӗҫе старши механика, комбайнерпа тракториста хутшӑнтармалла.

5. Тырпула «Сталинец» комбайнсемпе пухса кӗртнӗ ҫӗрте ӗҫлеме мӗнпур пек гусеничнӑй тракторсене малтанах юсаса хатӗрлемелле, комбайнсен гусеничнӑй тракторсемпе ӗҫлекен агрегачӗсем ҫумне чи опытлӑрах трактористсене ҫирӗплетмелле. ЧТЗ йышши гусеничнӑй тракторсемпе уборкӑра икӗ е виҫӗ комбайн кӑкарса ӗҫлеттернӗ ҫӗрте кӑна усӑ курмалла тӑвас.

6. Ремонтра ӗҫлекен рабочисем кирлӗ МТС-семпе совхозсене пулӑшма хулари промышленность предприятийӗсенчен, ҫар заказӗсене пурнӑҫа кӗртессине сиен кӳмесӗр, тимӗрҫӗсемпе слесарьсем, токарьсемпе сварщиксем, ҫавӑн пекех тата инженерсемпе механиксем вӑхӑтлӑха ярас.

Промышленность предприятийӗсем МТС-семпе совхозсене шефа илес тӗлӗшпе кӑтартнӑ пуҫарулӑха ырлас, вӗсем ҫуракине хатӗрленнӗ чухне МТС-семпе совхозсене ремонт бригадисем ярса, ытлашши оборудованипе инструментсем, запаслӑ пайсемпе материалсем уйӑрса пысӑк пулӑшу пачӗҫ, ҫак опытпа комбайнсемпе тракторсене юсанӑ вӑхӑтра тата уборкӑра анлӑн усӑ курмалла.

7. МТС-семпе совхозсен директорӗсене уборка пуҫланиччен комбайнсен кашни агрегачӗ валли комбайнер, комбайнер помощникӗ, икӗ тракторист парса ҫирӗплетме тата молотилкӑсем ҫинче ӗҫлекен машинистсемпе шоферсене кирлӗ таран вӗрентсе хатӗрлеме хушас. Урӑх ӗҫсенче ӗҫлекен комбайнерсене пурне те халех комбайнсем юсанӑ ҫӗре куҫармалла.

8. Комбайнерсем пулнӑ ҫынсене, халӗ учрежденисемпе предприятисенче тата колхозсенче хӑйсен специальноҫӗпе ӗҫлеменнисене, пурне те комбайнсем юсанӑ ҫӗрте тата комбайнпа тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте вӑхӑтлӑха ӗҫлеме явӑҫтармалла.

9. Транспорт инвентарӗсемпе ут таврашӗсене (урапасене, бестаркӑсене, арбӑсене, хӑмӑтсене, ӗнерчӗксене тата ыттине те) юсамалла тата ҫӗнӗрен хатӗрлемелле. Ҫакӑн пек йӗрке тӑвас: тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра колхозсемпе совхозсен мӗнпур лашисемпе, вӑкӑрӗсемпе пуринпе те, лашасем тата вӑкӑрсем ҫитмен районсенче вара тырпул пухса кӗртес ӗҫри чи хӗрӳллӗ тапхӑрта сӗт сахал паракан ӗнесемпе те уйхир ӗҫӗсенче тата ялхуҫалӑх продукчӗсене турттарнӑ ҫӗрте усӑ курмалла.

10. Тырпулсене пухса кӗртес ӗҫ пуҫланиччен кашни МТС-па совхозрах тырпулсене пухса кӗртме кирлӗ горючисемпе сӗрмелли материалсене 15 кунран кая мар ӗҫлемелӗх пухса запас туса хумалла.

11. Колхозсен председателӗсене МТС-сен директорӗсемпе тата политотделсен начальникӗсемпе пӗрле ҫапла тума хушас: халӑх пурӑнакан пунктран инҫетре выртакан участоксенче ӗҫлекен комбайнерсемпе трактористсем валли колхозсен шутӗнчен уйхирти вагонсем туса памалла тата пуррисене юсамалла.

12. МТС-сен директорӗсене ҫапла тума сӗнес: МТС ӗҫлесе пулӑшакан колхозсен тимӗрҫ лаҫҫисенче ӗҫлеме колхозниксене МТС мастерскойӗсенче вӗрентсе тимӗрҫӗсем хатӗрлеме пулӑшмалла, ҫавӑн пекех тата колхозсене тырпул пухса кӗртмелли машинӑсене юсама вырӑнта пулӑшас шутпа МТС механикӗсене ямалла.

13. Тырпул пухса кӗртес ӗҫ пуҫланиччен итемсем, зернохранилищӗсем, тӗштырӑсене типӗтме витсе тунӑ вырӑнсем, пахча-ҫимӗҫсемпе ҫӗрулми усрамалли складсем хатӗрлес тӗлӗшпе кашни колхоз тата совхоз тӑрӑх заданисем палӑртса хумалла, сушилкӑсене юсаса тата ҫӗнӗрен туса ҫитермелле, тырпулсене типӗтмешкӗн, авӑн ҫапмашкӑн тата вӗсене усрамашкӑн ҫуртйӗрсене майлаштарса хатӗрлемелле, сушилкӑсем валли вырӑнтах кирлӗ чухлӗ топливо хатӗрлесе хумалла. Совхозсен, МТС-семпе колхозсен тырпул тыткаламалли мӗнпур хатӗрӗсене юсаса хатӗрлемелле тата виҫмелли тарасемпе ытти хатӗрсене юсаса хатӗрлемелле.

14. МТС-семпе совхозсен директорӗсен тата колхозсен председателӗсен, комбайнерсемпе пӗрле, тырпул пухса кӗрес ӗҫ пуҫланиччен кашни комбайн агрегачӗ ҫумне комбайнпа пухса кӗмелли тӗштырӑсен тата ытти культурӑсен участокӗсене вырӑнта палӑртса ҫирӗплетсе памалла, ытти ҫӗр лаптӑкӗсене вара ҫӑмӑл машинӑсемпе тата алӑпа пухса кӗртмешкӗн уйрӑм участоксем ҫине пайласа тухмалла.

15 Тырпул ӳсекен пысӑк участоксене тӗштырӑ хытса ҫитес умӗн йӗри-тавра вырса ҫавӑрӑнмалла, кунти тырпула пухса илнӗ хыҫҫӑн ҫав вырӑна ҫийӗнчех сухаласа пӑрахмалла. Тырӑ ҫӗмелӗсене йӑвӑ лартни пулмалла мар. Тырпулсене пухса кӗртес тапхӑрӑн пур вӑхӑчӗсенче те тырпула шанчӑклӑн тата талӑкӗпех сыхламалла тӑвас шутпа, хирте хуралсем тӑратмалла тата тӗрӗслесе ҫӳрекен дежурнӑйсене уйӑрмалла.

16. Колхозниксем, колхозницӑсем, подростоксем пурте, совхозсен рабочийӗсемпе служащийӗсем тата вӗсен ҫемьисен членӗсем пурте, ҫавӑн пекех колхозсемпе совхозсен территорийӗсенче пурӑнакан, ӗҫлеме пултаракан ытти ҫынсем пурте тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе хутшӑнмалла тӑвас пулать.

Хулари халӑха тата вӗренекенсене ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлеме малтанах мобилизацилесе, вӗсене тивӗҫлӗ колхозсемпе совхозсене вӑхӑтра ҫитермелле. Вӗсене колхозсемпе совхозсенче бригадӑсем, звеносем тӑрӑх тата ӗҫӗн ытти участокӗсем тӑрӑх уйӑрса валеҫмелле, колхозсемпе совхозсене ҫум ҫумлама килнӗ ҫынсене тырпул пухса кӗртес ӗҫӗн пӗтӗм тапхӑрӗнче ӗҫлеме хӑвармалла.

17. Облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи парторганизацисене, МТС-семпе совхозсенчи политотделсен начальникӗсене тырпула пухса кӗме хатӗрленес тата пухса кӗрес ӗҫре МТС-сем, совхозсем, колхозсем, бригадӑсем, комбайнерсем, трактористсем, совхозсемпе МТС-сен рабочийӗсем тата уйрӑм колхозниксем ӑмӑртса ӗҫлессине анлӑн организацилес енӗпе колхозсене, МТС-семпе совхозсене пулӑшма хушас.

II

Тырпулсене пухса кӗрес енӗпе

1. Уйхирти тырпулсем пулса пынине тӗплӗн сӑнаса тӑмалла, талккишӗпе пиҫсе ҫитессине кӗтсе тӑмасӑр, вырӑнӗ-вырӑнӗпе суйласа илсе алӑпа вырмалла, ҫӑмӑл машинӑсемпе тата комбайнсемпе пухма тытӑнмаллла.

Тырпула алӑпа вырма тата ҫӑмӑл машинӑсемпе пухма тӗшши хытас умӗн тытӑнмалла, комбайнсемпе вара — тырӑсем пӗтӗмӗшпе пиҫсе ҫитес умӗн пуҫӑнмалла. Комбайнсене тата тырӑ вырмалли ҫӑмӑл машинӑсене, лашасене сменӑсем тӑрӑх улӑштарса талӑкне 16 сехетрен кая мар ӗҫлеттермелле.

2. Кашни колхозпа совхозра тӗштырӑсене, пӑрҫа-ясмӑксене тата ҫу паракан культурӑсене ҫакӑн пек сроксенче пухса кӗртмелле: пучахлӑ тӗштырӑ культурисене, капана хывассипе пӗрле, 30 ӗҫ кунӗнчен вӑраха ямасӑр пухса кӗртмелле; вирсемпе пӑрҫа-ясмӑксене, ҫапассипе пӗрле, — 20 ӗҫ кунӗнче; хӗвелҫаврӑнӑшне — 15 ӗҫ кунӗнче; йӗтӗне, горчицӑпа рыжика, ҫав культурӑсене ҫапассипе пӗрле, — 10 ӗҫ кунӗнче; кӑшмансене — 5 ӗҫ кунӗнчен вӑраха ямасӑр пухса кӗртмелле.

3. Уборка пуҫланас умӗн ӗҫлеме тивӗҫлӗ ҫӗре мӗнпур комбайнсене илсе ҫитермелле, вӗсем ҫумне лайӑх тракторсем уйӑрса ҫирӗплетмелле. Тырпулсене пухса кӗмелли тапхӑр валли комбайнсен кашни агрегачӗ ҫумне колхозниксемпе совхозсенчи рабочисен ялан ӗҫлекен йышне уйӑрса ҫирӗплетмелле, машинӑсем патне шыв, горючи турттарма, ҫапнӑ тырра турттарса тасатма тата типӗтме вӗсене кирлӗ таран туртӑм вӑйӗсем уйӑрса памалла. Комбайнсен ӗҫре ирӗксӗрех чарӑнса лармалла пулсан, комбайнсен агрегачӗ ҫумне ҫирӗплетнӗ колхозниксене тата совхозри рабочисене ҫав вӑхӑтра тырра ҫӑмӑл машинӑсемпе тата алӑпа вырнӑ ҫӗрте ӗҫлеттермелле.

4. Комбайнсем юсавлӑ маррине пула чарӑнса тӑрсан, тӗштырӑпа ытти культурӑсене тӑкӑнма памалла мар. Комбайнсем МТС айӑпӗпе чарӑнса тӑраҫҫӗ пулсан, ҫав ҫӗр лаптӑкне комбайнсемпе вырса пуҫтарма палӑртнӑ пулин те, тырпула ҫӑмӑл машинӑсемпе тата алӑпа вырмалла.

Комбайнсен агрегачӗ хӑйӗн планне тултарсан, комбайна ҫӑмӑл машинӑсемпе тата алӑпа вырса пуҫтарма уйӑрнӑ участоксем ҫине ҫийӗнчех куҫармалла.

5. Тырӑ вырнӑ ҫӗрте, жаткӑсемпе тата лобогрейкӑсемпе пӗрлех, тырӑ ҫулма майлаштарса йӗркеленӗ сенокосилкӑсемпе те усӑ курмалла. Тырӑ вырмалли ҫӑмӑл машинӑсем ҫинче ӗҫлеме чи опытлӑрах колхозниксемпе колхозницӑсене, совхозсенчи рабочисене уйӑрмалла, вӗсем ҫумне ӗҫ участокӗсене ҫирӗплетмелле.

6. Тырпула ҫӑмӑл машинӑсемпе тата алӑпа вырса пӑрахнӑ хыҫҫӑн кӗлте ҫыхас тата кӗлтесене ҫӗмеле хывас ӗҫе ҫийӗнчех организацилемелле. Кӗлте турттарса капан хывас ӗҫе тырӑ вырса пӗтернӗ хыҫҫӑн 10 кунран кая юлмасӑр туса ӗлкӗртмелле. Тырпул пухса кӗртнӗ мӗнпур ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче пучахха кӗрешлепе тураса пуҫтарса ӑна купаласа хумалла, ҫавӑн пекех комбайнсем хыҫҫӑн та выльӑх апачӗ валли улӑмпа арпана пухса капана хывмалла. Уйхирте кӗлтене капана хывмасӑр хӑварма чарас.

7. Уборка пуҫланиччен 10 кун малтан мӗнпур колхозсемпе совхозсенче вӑрлӑхлӑх акнӑ тырпулсен участокӗсене тӗрӗслесе тухмалла, акнӑ чухне вӑрлӑх участокӗсене уйӑрса хӑварман пулсан е тата уйӑрса хӑварнӑ участоксем ҫинчи тырпул начартарах пулсан, вӑрлӑх участокӗсене сортлӑ вӑрлӑх акнӑ ытти тухӑҫлӑрах тухакан ҫӗр лаптӑкӗсенчен уйӑрмалла, ун пеккисем пулмасан вара ахаль вӑрлӑх акнӑ вырӑнта участоксем уйӑрмалла.

Колхозсенче вӑрлӑхлӑх акнӑ участоксене ҫак виҫерен иртермелле мар тӑвас: кашни уйрӑм культурӑн пӗтӗм лаптӑкӗнчен кӗрхи тулӑпа ыраш—12 процентран, сӗлӗ тата урпа—13 процентран, ҫурхи тулӑ тата хуратул—15 процентран, кукуруза—8 процентран, вир—7 процентран, хӗвелҫаврӑнӑшпе ҫу паракан ытти культурӑсем, йӗтӗнпе арахиссӑр пуҫне—5 процентран, йӗтӗнпе арахис — 15 процентран, ҫӗрулми — 15 процентран ытла пулмалла мар.

Колхозсем государство умӗнчи хӑйсен обязательствине тултариччен, вӑрлӑх валли уйӑрнӑ ҫӗр лаптӑкӗсенчен пухса илнисӗр пуҫне, пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнчен вӑрлӑх фончӗ хывма чарас. Ҫапла тӑвас: вӑрлӑх фончӗсене пӗтӗмӗшпех хывнӑ хыҫҫӑн колхозсемпе совхозсенчи вӑрлӑх участокӗсенчен пухнӑ тӗштырӑ ытлашши юлать пулсан, вӑрлӑх участокӗсенчен пухса илнӗ ҫав тӗштырра колхозсемпе совхозсем хӑйсен государство умӗнчи обязательствисене тултарнӑ ҫӗре пама пултараҫҫӗ, ҫав обязательствӑсене тултарнӑ хыҫҫӑн вара — вӑл тырӑпа ытти ҫӗрте те усӑ курма пултараҫҫӗ.

А. Йӗтӗн енӗпе

8. Долгунец йӗтӗне пиҫсе сарӑ тӗс кӗрсен татмалла. МТС директорӗсемпе колхоз председателӗсен йӗтӗн татма пуҫличчен йӗтӗне машинӑпа татма тивӗҫрех ӳснӗ вырӑнсене уйӑрса памалла, йӗтӗнпе кантӑр татнӑ ҫӗрте йӗтӗн татакан тата кантӑр пухакан мӗнпур машинӑсемпе усӑ курмалла, йӗтӗнпе кантӑра 10 кунран вӑраха ямасӑр пухса кӗртмелле.

9. Йӗтӗн тума ҫерем ҫине сарса пӑрахассине тата шыва хутассине сентябрӗн 10-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗҫлемелле, кантӑр хутассине вара октябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр ӗлкӗртмелле.

Архангельск, Вологда, Киров, Молотов, Новосибирск, Омск тата Иркутск облаҫӗсенчи, Алтай тата Красноярск крайӗсенчи Коми тата Удмурт АССР-сенчи колхозсене кӑҫал ҫапнӑ йӗтӗнрен 30 процентне килес ҫул сарса пултарма ирӗк парас, ҫав продукцие вӗсен 1943 ҫулти августӑн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр обязательнӑй йӗркепе государствӑна памалла.

Йӗтӗн сарса пултармалли лайӑх вырӑнсем ҫук ҫӗрти колхозсен правленийӗсене долгунец йӗтӗне сивӗ шывра хутса пултармалли майпа анлӑн усӑ курма хушас.

Б. Сахӑр кӑшманӗ енӗпе

10. Сахӑр кӑшманне массӑллӑн кӑлармa Казах, Киргиз ССР-сенче, Омск тата Челябинск облаҫӗсенче — сентябрӗн 5-мӗшӗнче; Алтай, Краснодар крайӗсенче тата Узбек ССР-ӗнче — сентябрӗн 15-мӗшӗнче; ССР Союзӗн ытти районӗсенче сентябрӗн 20-мӗшӗнче тытӑнмалла тӑвас. Сахӑр кӑшманне кӑларма ҫу[illegible]на шута илсе тытӑнмалла: сахӑр заводӗсене ӗҫе янӑ тӗле заводӑн территорийӗ ҫинче сахӑр кӑшманӗ 5 куна ҫитмелӗх запас пултӑр, кайран вара сахӑр кӑшманне сахӑр завочӗсем патне татти-сыппиcӗр турттарса пырса тӑмалла.

11. Сахӑр кӑшманне ҫакӑн пек сроксенче кӑларса турттармалла:

	Кӑларасси	Турттарасси
Воронеж, Курск, Орел, Пенза, Рязань, Саратов, Тамбов, Тула, Сталинград, Чкалов, Куйбышев, Киров, Молотов, Челябинск облаҫӗсем тӑрӑх, Тутар тата Башкир АССР-семпе Приморски край тӑрӑх	октябрӗн 20-мӗш	ноябрӗн 10-мӗш
Омск, Новосибирск облаҫӗсем тӑрӑх, Красноярск тата Алтай крайӗсем тӑрӑх	октябрӗн 10-мӗш	ноябрӗн 10-мӗш
Киргиз тата Казах ССР-сем тӑрӑх	ноябрӗн 10-мӗш	декабрӗн 10-мӗш
Узбек ССР-ӗ тӑрӑх	ноябрӗн 25-мӗш	декабрӗн 20-мӗш
Грузин, Армян ССР-сем тӑрӑх тата Краснодар крайӗсем тӑрӑх	ноябрӗн 5-мӗш	ноябрӗн 25-мӗш
УССР-ӑн Харьков тата Ворошиловград облаҫӗсем тӑрӑх	октябрӗн 30-мӗш	ноябрӗн 20-мӗш

Контрактаци договорӗ тӑрӑх сахӑр кӑшманӗ турттарнӑшӑн тивӗҫекен сахӑра сахӑр завочӗсен турттаракансене тӳрех, вӗсем сахӑр заводне тата кӑшман хатӗрлекен пункта мӗн чухлӗ кӑшман турттарнине шута илсе, памалла, кӑшман турттарнӑшӑн укҫан тӳлемеллине турттаракансене йышӑннӑ тарифран 50 процентне тӳлемелле.

12. СССР Наркомпищепромне тата СССР Наркомземне, облисполкомсемпе, крайисполкомсемпе тата республикӑсен совнаркомӗсемпе калаҫса татӑлнӑ хыҫҫӑн, сахӑр кӑшманне хиртен турттарса типтерлемелли плана 10 кун хушшинчи срокра тума хушас. Облисполкомсемпе крайисполкомсен тата республикӑсенчи совнаркомсен ҫав плана колхозсенчи транспорт хатӗрӗсем пирки ӗҫ мӗнле тӑнине шута илсе районсемпе колхозсем патне ҫитермелле.

Сахӑр кӑшманне хирти купасенчен турттарассине сахӑр завочӗсем палӑртнӑ нарядсемпе сроксем тӑрӑх туса пымалла.

13. Августӑн 25-мӗшчен сахӑр кӑшманне йышӑнма тата ӑна сыхласа усрама хатӗрлев пункчӗсене хатӗрлесе ҫитермелле, сахӑр завочӗсемпе хатӗрлев пункчӗсенче сахӑр кӑшманне витме кирлӗ таран витмелли япаласем хатӗрлесе ҫитермелле, пунктсем патне тымалли вырӑнсене йӗркене кӗртмелле тата тивӗҫлӗ кадрсем (кагатчиксем, приемщиксем, весовщиксем) хатӗрлемелле.

В. Ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем енӗпе

14. Ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсене пухса кӗртес ӗҫе кӗрхи сивӗсем килсе ҫитиччен вӗҫлемелле. Ҫӗрулмине пухса илнӗ хыҫҫӑн ҫӗрулми пулнӑ участоксене сӳремелле, ҫак вӑхӑтра ҫиеле тухакан ҫӗрулмисене пухса илмелле. Кӑларнӑ ҫӗрулмине кашни кунах пуҫтарса илмелле тӑвас пулать.

15. Пахча-ҫимӗҫ культурисен, уйрӑмӑнах суханӑн, кишӗрӗн тата кӑшманӑн вӑрлӑхӗсене пухса кӗртес ӗҫе сентябрь уйӑхӗнче вӗҫлемелле, вӗсене пухса илнӗ хыҫҫӑн типӗтмелле, ҫапмалла, тасатмалла тата вӑрлӑхсене хатӗрлев организацисене памалла.

16. Пахча-ҫимӗҫ культурисен вӑрлӑхӗсене туса илес ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пынине палӑртса, облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикӑсен совнаркомӗсене кӑҫалхи ҫул пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсене лайӑх пӑхса ӳстермелле тума тата пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсене кирлӗ чухлех туса илме хушас; пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсене хатӗрлев планӗсене тултарма тата пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем енӗпе колхозсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме кирлӗ чухлех туса илмелле.

Наркомзагпа СССР Наркомземӗ пӗрле тунӑ эквивалентсем тӑрӑх, обязательнӑй поставка шучӗпе пахча-ҫимӗҫсем вырӑнне пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсене пама колхозсене ирӗк парас.

Г. Ҫӗрмамӑкӗ енӗпе

17. Ҫӗрмамӑкне шыв илекен вырӑнсенче ӳстерекен районсенче 1942 ҫулти августӑн 1-мӗш тӗлне ҫӗрмамӑкӗ акнӑ вырӑнсене 4—5 хутран кая мар культиваци тумалла тата 4 хутран кая мар тарӑннӑн кӑпкалатмалла.

Ҫӗрмамӑк акнӑ вырӑнсене касӑсем тӑрӑх тӗрӗс шӑварассине организацилемелле, ҫӗрмамӑкӗ акнӑ вырӑнта типме памалла мар, ҫавӑн пекех ытлашши шӑварни те пулмалла мар.

18. Ҫӗрмамӑкне пухса кӗнӗ чухне ӑна сортсем тӑрӑх уйрӑмӑн пухса кӗртмелле, пулса ҫитнӗ ҫӗрмамӑкӗ пулса ҫитмен ҫӗрмамӑкӗпе хутшӑнса кайни, ҫавӑн пекех тата чирлӗ пучахсемпе сывӑ пучахсем хутшӑнса кайни пулмалла мар.

Ҫӗрмамӑк-сыреца пухса кӗме тытӑнас умӗн вӑл ӗҫе тума вӑхӑтлӑха явӑҫтарнӑ ҫынсене пурне те инструкцилемелле.

Ҫӗрмамӑкне шӑварса ӳстерекен районсенче кӗрхи ҫӗртмене вӑхӑтра тӑвас шутпа, колхозсемпе совхозсене ноябрӗн 20-мӗш хыҫҫӑн уҫӑлса кайман пучахсем тӗл пулсан та, ҫӗрмамӑкне пухса кӗртме тата ҫакӑн хыҫҫӑн тасатма сӗнес; ҫӗрмамӑк-сыреца пухса илес ӗҫе декабрӗн 1-мӗш тӗлне тата уйхирсене ҫӗрмамӑк тунипе гуза-пайран тасатассине декабрӗн 5-мӗш тӗлне пӗтӗмӗшпех туса ҫитермелле.

19. Иртнӗ ҫулсенчи ҫӗрмамӑк-сырецӑн юлашкисене хатӗрлев пункчӗсенчен турттарса тухас ӗҫе сентябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пӗтӗмӗшпех туса ҫитермелле, ҫапла майпа кӑҫалхи ҫӗрмамӑк-сыреца илмелле пуличчен ҫӗнӗ ҫӗрмамӑкне хумалли складсемпе ҫуртйӗрсене пӗтӗмӗшпех юсаса, тасатса тата дезинфекци туса ҫитермелле.

Д. Табак тата махорка енӗпе

20. Ҫакӑн пек йӗрке тӑвас: табак культурине вӑл пӗтӗмпех пулса ҫитсен кӑна, май пур чухне ярусcем тӑрӑх пухса кӗртмелле; табак ытлашши пулса кайни, ҫавӑн пекех тата пулса ҫитмен ҫулҫӑсене пухса илни пулмалла мар.

21. Табакпа махоркӑна ҫак сроксенче пухса кӗртмелле тӑвас:

а) Омск, Вологда, Новосибирск тата Иркутск облаҫӗсенче, Алтай тата Крсаноярск крайӗсенче, Удмурт АССР-ӗнче махоркӑна сентябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр, махорка акакан ытти мӗнпур районсенче сентябрӗн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пухса кӗртмелле;

б) Казах, Узбек, Киркиз, Таджик ССР-сенче, Сталинград тата Воронеж облаҫӗсенче, Алтай крайӗнче сарӑ табака сентябрӗн 20-мӗш тӗлне, Краснодар крайӗпе Армян ССР-ӗнче октябрӗн 1-мӗш тӗлне, Грузин тата Азербайджан ССР-сенче — октябрӗн 10-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пухса кӗртмелле.

22. Государствӑна табакпа махорка памалли плана правительство палӑртнӑ сроксенче пурнӑҫа кӗртмелле, лайӑх сортлӑ табакӑн хисепне ӳстерес тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнмалла.

Е. Кок-сагыз енӗпе

23. СССР Наркомземне, Наркомрезинпрома, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикӑсен совнаркомӗсене, парти обкомӗсене, крайкомӗсене тата союзлӑ республикӑсенчи компартисен Центральный Комитечӗсене 1942 ҫулти кок-сагызӑн вӑрлӑхӗпе тымарӗсен тухӑҫлӑхне татӑклӑнах ӳстерме хушас; ретсем хушшинче 4 хутран кая мар ҫумласа кӑпкалатмалла, кок-сагыз акнӑ вырӑна каучук паман одуванчиксенчен 2 хутран кая мар тасатса тухмалла; тӗштырӑ культурисене пухса кӗнӗ вӑхӑтра та кок-сагыза пӑхса ӳстерес ӗҫе чарса лартмалла мар.

24. Красноярск крайӗнчи, Новосибирск, Омск, Ҫурҫӗр-Казахстан, Кустанай, Свердловск, Челябинск тата Молотов облаҫӗсенчи районсенче кок-сагыза пухса кӗртес ӗҫе сентябрӗн 25-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗҫлемелле, ытти мӗнпур районсенче октябрӗн 5-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗҫлемелле.

25. Пухса илнӗ кок-сагыза кашни звено тӑрӑх уйрӑмӑн шута илсе тымалла тӑвас пулать, кок-сагыз акса тӑвас ӗҫе хавхалантарма илекен премисене, надбавкӑсене тата резинӑран тунӑ япаласене тӳрремӗнех кок-сагыз патӗнче ӗҫленӗ колхозниксем хушшинче тӗрӗс валеҫессине пурнӑҫа кӗртмелле.

26. Хатӗрлев аппаратне кок-сагыз акакан колхозсем патнерех ҫывхартас шутпа, Наркомрезинпрома хатӗрлев пункчӗсен йышне пӑхса тухса вӗсене ӳстермелле тума хушас, ҫавӑн пекех тата кок-сагызӑн тымарӗпе вӑрлӑхӗсе-

Юлашки 2-мӗш страницӑра

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнче

1942 ҫулта тырпулсене пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлесси ҫинчен

Юлашки

пе потребкооперации тата ытти заготовительсем урлӑ хатӗрлес ӗҫе организацилеме хушас.

Хатӗрлев пунктӗсене августӑн 25-мӗш тӗлне кок-сагыз тымарӗсене йышӑнма хатӗрлесе ҫитермелле, ҫав пунктсене кадрсем, склад валли ҫурт-йӗрсем тата тарасасем памалла.

27. Кок-сагыза контрактацилес тӗлӗшпе тунӑ договорсем закон пулса тӑраҫҫӗ. Колхозсем хатӗрлев организацисене контрактаци договорӗ тӑрӑх палӑртнӑ чухлӗ кок-сагыз (тымар тата вӑрлӑх) памасан, вӗсем хӑйсем парса ҫитермен продукцин хакне виҫӗ хут ӳстерсе (хатӗрлев хакӗсемпе) материальнӑй ответ тытаҫҫӗ.

III
Авӑн ҫапас тата тырпул турттарас енӗпе

1. Тырӑ вырма тухнӑ хыҫҫӑн 5 кунран кая юлмасӑр авӑн ҫапас ӗҫе тытӑнмалла, чи малтан ҫӗмелсенчи тырпула ҫапас ӗҫе организацилемелле, молотилкӑсене талӑкра 20 сехетрен кая мар ӗҫлеттермелле. Комбайнсемпе вырас ӗҫе вӗҫленӗ хыҫҫӑн, тырпула уйхирти итемсем ҫинче ҫапнӑ ҫӗрте комбайнсемпе усӑ курмалла.

2. Колхозсенче тата совхозсенче комбайнсемпе вырнӑ чухне тата молотилкӑсемпе ҫапнӑ чухне тухнӑ тырпула тӗплӗн шута илессине, ҫавӑн пекех Наркомзагӑн хатӗрлев пунктӗсене тата колхозсемпе совхозсен склачӗсене хывакан тырпула обязательнӑй йӗркепе виҫессине организацилемелле. Тырпула сыхласа усрас тата шута илсе пырас ӗҫшӗн бригадӑсенче—бригадир, колхозра—колхоз председателӗ, отделенипе фермӑра—отделенипе ферма управляющийӗ тата совхозра — совхозӑн директорӗпе политотдел начальникӗ ответ тытаҫҫӗ.

Ҫапнӑ хыҫҫӑн итемсем ҫинче тата уйхирте выртса тырӑ чылай пӑсӑлни ҫинчен совхозсен директорӗсемпе колхозсен председателӗсене асӑрхаттарас, ҫавӑн пирки, тырпула пӑсӑлма парас мар тесе, комбайнсемпе пухнӑ тата авӑн ҫапнӑ хыҫҫӑн тырпула итемсем ҫинче 10 кунран ытла хӑварма чарас.

3. Ҫӗрулмине тата пахча-ҫимӗҫсене чӗрӗлле тата ҫимӗҫсем туса хатӗрлесе сыхласа усрассине организацилемелле, августӑн 10-мӗшӗнчен кая юлмасӑр лупассем, складсем, хранилищӗсем хатӗрлемелле, катка-пичкесем, пахча-ҫимӗҫ тӑварламалли, йӳҫӗтмелли тата ытти пунктсене хатӗрлесе ҫитермелле.

4. Курӑксен вӑрлӑхӗсене ҫапас тата малтанлӑха тасатса хурас ӗҫе вӑрлӑхлӑх курӑксене пухса кӗртнӗ хыҫҫӑнах тӑвас пулать. МТС директорӗсене ҫапла тума хушас: вӑрлӑхлӑх курӑксене ҫапма МК—1100 молотилкӑсене юсаса ҫитермелле тата вӗсемпе туллин усӑ курмалла.

5. Колхозсен правленийӗсен тата совхозсен директорӗсен тырпула, ҫӗрулмине, пахча-ҫимӗҫе тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсене уйхиртен складсене, хранилищӗсене тата хатӗрлев пунктӗсене турттарма транспорт бригадисем организацилемелле, ҫав бригадӑсене колхозсен правлени членӗсем ертсе пымалла. Транспорт бригадисене кашни кун мӗн чухлӗ ялхуҫалӑх продукчӗсем турттармаллине кӑтартса заданисем парас пулать.

6. Облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикӑсен совнаркомӗсене ҫапла тума хушас: колхозсен фермисенчи тата колхозниксен хӑйсен килӗсенчи сӗт сахал паракан ӗнесене ялхуҫалӑх продукчӗсене пухса кӗртес тата турттарас вӑхӑтра ӗҫе мӗн чухлӗ хутшӑнтармаллине кӑтартса районсем тӑрӑх заданисем памалла, районсенче колхозсем тӑрӑх заданисем памалла.

7. Колхоз председателӗсен, ҫак ӗҫе зоотехника тата ветеринари работникӗсене хутшӑнтарса, ялхуҫалӑх ӗҫӗсене тума ӗнесем уйӑрса илсе вӗрентмелле, уйӑрнӑ ӗнесене ялхуҫалӑх продукчӗсене пухса кӗртнӗ тата турттарнӑ вӑхӑтра обществӑллӑ кӗтӳрен илсе уйхирпе транспорт бригадисене памалла, вӗсемшӗн бригадирсем ответ тытмалла.

8. Облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикӑсен совнаркомӗсене ҫапла тума ирӗк парас: хулари учрежденисен автотранспортне, ҫар заказӗсене пурнӑҫа кӗртессине сиен тумасӑр, 50 процент таран колхозсемпе совхозсене облисполкомсем, крайисполкомсем тата республикӑсен совнаркомӗсем палӑртса панӑ срокра ялхуҫалӑх продукчӗсене государствӑна парса татас тӗлӗшпе пулӑшмашкӑн мобилизацилеме ирӗк парас.

Автомашинӑсен вӑйӗпе туллин усӑ курас шутпа, МТС-сен, совхозсен директорӗсене тата колхозсен председателӗсене тырӑ тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсене турттарнӑ ҫӗрти кашни автомашинӑн ещӗкӗсене хӑмасем ҫыпӑҫтарса пысӑклатма хушас.

IV
Тырпула пухса кӗртнӗ вӑхӑтра колхозсенче ӗҫшӗн тӳлес енӗпе

1. Ялхуҫалӑх продукчӗсене пухса кӗртес тата турттарас тӗлӗшпе ӗҫлекен колхозниксене хавхалантарас шутпа, тырпула пухса кӗртнӗ вӑхӑтра тата тырпул, хӗвелҫаврӑнӑш, ҫӗрулми, пахча-ҫимӗҫ хатӗрлевӗн планне пурнӑҫа кӗртиччен, колхозниксене аванс пама тата хуҫалӑхри ӗҫсем валли государствӑн хатӗрлев пунктӗсене панӑ тырпулӑн ҫакӑн пек хисепӗ чухлӗ уйӑрса илмелле тӑвас: тӗштырӑ—15 процент, рис—10 процент, хӗвелҫаврӑнӑш—5 процент, ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ—15 процент.

Уйӑрнӑ тӗштырӑран, рисран, хӗвелҫаврӑнӑшӗнчен, ҫӗрулмирен тата пахча-ҫимӗҫрен ҫуррине колхозниксем тырпула пухса кӗртес ӗҫре тата ытти уйхир ӗҫӗсенче ялхуҫалӑх продукчӗсене турттарнӑ вӑхӑтра тунӑ ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫсе памалла.

Иккӗмӗш ҫур пайне ҫулталӑк пуҫламӗшӗнчен вара пур тӗрлӗ ӗҫсенче, ҫав шутрах тырпула пухса кӗртес ӗҫре те тунӑ ӗҫкунӗсем тӑрӑх мӗнпур колхозниксем хушшинче валеҫмелле тата колхозӑн хуҫалӑхри ӗҫӗсене тунӑ ҫӗре ямалла.

Колхозсене ҫакӑн пек тума хушас: тырпул пухса кӗртме тытӑниччен ӗҫкунӗсен минимумне ӗҫлесе туман тата тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра пӗр сӑлтавсӑрах ӗҫе тухман колхозниксене аванс йӗркипе тырӑ памалла мар.

2. Колхозсен правленийӗсене тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра ҫӑннипе тунӑ ӗҫкунӗсем тӑрӑх колхозниксене аванс йӗркипе памалли тырӑ фондӗнчен ҫакӑн чухлӗ пама сӗнес:

а) тӗштырӑсене, вӑрлӑхлӑх курӑксене, хӗвелҫаврӑнӑшӗ, сахӑр кӑшманӗ, йӗтӗн, кантӑр, кок-сагыз тата ытти техникӑллӑ культурӑсене (ҫӗрмамӑкӗсӗр пуҫне) пухса кӗртес ӗҫре ӗҫленӗшӗн кашни ӗҫкунӗ пуҫне 1,5 килограмм таран тӗштырӑ памалла;

б) ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ пухса кӗртес ӗҫре ӗҫленӗшӗн: Ленинград, Мускав, Калинин, Ярославль, Иваново, Киров, Горький, Смоленск, Тула, Рязань, Орел облаҫӗсенчи, Чӑваш тата Мари АССР-сенчи колхозсенче кашни ӗҫкунӗ пуҫне пилӗк килограмм таран ҫӗрулми е пахча-ҫимӗҫ памалла;

в) ӗҫкунӗсем тӑрӑх тӗштырӑ, ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ парас ӗҫе тырпула пухса кӗртнӗ вӑхӑтра эрнере пӗр хутчен тумалла; тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра тунӑ ӗҫкунӗсемшӗн панӑ тырра, ҫӗрулмине тата пахча-ҫимӗҫе ҫулталӑк вӗҫленнӗ вӑхӑтра ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫнӗ чухне пӗтӗмпе тивекен тырпулсен хисепне кӗртеҫҫӗ.

3. Улӑмпа пӗтӗмпех усӑ курас тата комбайнсем ӗҫленӗ хыҫҫӑн ӑна уйхиртен хӑвартрах пухса кӗртес шутпа, пухнӑ тата колхоз килкартине кӗртнӗ е пухса капана хывнӑ улӑмран ҫав ӗҫре пулнӑ колхозниксене улӑмӑн пилӗкмӗш пайне пама колхоз правленийӗсене ирӗк парас.

4. МТС-сен тухса ҫӳрекен тата участковӑй механикӗсене, вӗсем комбайнсемпе тырпул пухса кӗртес плана вӑхӑтра тата лайӑх пахалӑхпа пурнӑҫлас ӗҫре пулнӑ пулсан, тырпула пухса кӗртнӗ хыҫҫӑн 15 кунран кая юлмасӑр преми—10-шар пӑт тырӑ памалла тӑвас.

V
Ялхуҫалӑх продукчӗсен хатӗрлевӗ енӗпе

1. Тӗштырра тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсене элеваторсемпе хатӗрлев пунктӗсене кайса пама колхозсенче тата совхозсенче тырпула пухса кӗртме пуҫланӑ малтанхи кунранах тытӑнмалла, пухса кӗртнӗ тырпула уйхирте тата итемсем ҫинче нумай вӑхӑт хушши тытса усрамалла мар. Лашасемпе тата ытти транспортпа тӗштырӑ, кӑшман, ҫӗрулми пахча-ҫимӗҫ тата техникӑллӑ культурӑсем турттарас тӗлӗшпе колхозсемпе совхозсене пилӗккунлӑх заданисем памалла, пилӗккунлӑх заданисене пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе тӑмалла. Колхозсемпе совхозсен пурин те правительство палӑртнӑ срокра государствӑна тӗштырӑ, техникӑллӑ культурӑсем, ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ памалли плана тултарас пулать.

2. Чӗрӗ тата нӳрӗ тырӑсене колхозсен, совхозсен вӑйӗсемпе тата хатӗрӗсемпе вӑхӑтра типӗтес ӗҫе организацилемелле, ку тӗлӗшпе 1942 ҫулти августӑн 1-мӗшӗнчен колхозсемпе совхозсенче ӗлӗк усӑ курнӑ сушилкӑсене пурне те юсаса ҫитермелле, ҫӗнӗ сушилкӑсем тӑвас пулать, сушилкӑсене валли топливо тата ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ памалла.

3. Колхозсемпе совхозсем государствӑна паракан тӗштырӑн, ҫу кӑлармалли культурӑсен тата ҫӗрулмин малтанхи ушкӑнӗ колхозсемпе совхозсем государствӑран илнӗ ссудӑсене витнӗ ҫӗре ҫавӑн пекех тата колхозсен обязательнӑй йӗркепе памалла, МТС ӗҫленӗшӗн памалли иртнӗ ҫулти парӑмсене татнӑ ҫӗре каймалла.

4. Колхозсен МТС ӗҫӗшӗн натуроплата мӗн чухлӗ памаллине шутласа хума колхозсенчи тырпул тухӑҫне разрядсем тӑрӑх уйӑрас ӗҫре Наркомзаг уполномоченнӑйӗсене облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи советпа парти организацийӗсен тивӗҫлӗ пулӑшу памалла, тырӑсен тухӑҫлӑхне пӗчӗклетсе кӑтартма, ҫапла вара натуроплата виҫине юриех пӗчӗклетме кирек мӗнле хӑтланнисене те, государствӑна хирӗҫле хӑтланнисене, пурне те сирсе пырас пулать.

5. МТС ӗҫӗшӗн колхозсене счетсем парас ӗҫе Наркомзаг уполномоченнӑйӗсенчен колхозсене тырпул тухӑҫӗ тӗлӗшпе хӑш разряда кӗртни ҫинчен извещенисем илнӗ хыҫҫӑн пӗр эрнелӗх срокран кая юлмасӑр туса пӗтермелле. Ҫулнӑшӑн, тырпула комбайнсемпе пухса кӗртнӗшӗн, авӑн ҫапнӑшӑн, тырӑ сӑварнӑшӑн, тракторсемпе тырӑ турттарнӑшӑн колхозсене счетсем парассине МТС ҫав ӗҫсене пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн пӗр эрнелӗх срокран кая юлмасӑр туса пӗтермелле.

МТС директорӗсемпе политотделсен начальникӗсене ҫакӑн ҫинчен асӑрхаттарас: МТС ӗҫленӗшӗн натуроплата тӗрӗс шутласа хурассишӗн, колхозсене палӑртнӑ срокра счетсем парассишӗн тата ҫав счетсем тӑрӑх колхозсем тӗштырӑсене тата ытти культурӑсене парса татмалла тӑвассишӗн вӗсем кашни харпӑрхӑй государство умӗнче ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ.

СССР Наркомземӗн колхозсем МТС-сене ӗҫшӗн натуроплата тата укҫа-тенкӗ вӑхӑтра парса татнине тӗрӗслесе тӑмалла.

6. Колхозсем обязательнӑй поставка тӑрӑх тата МТС ӗҫӗшӗн (авӑн ҫапнисӗр пуҫне) натуроплата тӳлес шутпа хӗвелҫаврӑнӑш, тӗштырӑ тата ытти культурӑсем панӑ чухне, ҫавӑн пекех тата колхозниксемпе единоличник хуҫалӑхӗсен обязательнӑй поставкисене тултарнӑ чухне алла илнӗ обязательствӑсенче тата МТС панӑ счетсенче кӑтартнӑ пек культурӑсем ҫеҫ памалла тӑвас. Тулӑ, рис, пӑрҫа, хуратул, вир тата ыраш йышши культурӑсене пурне те алла панӑ обязательствӑсенче тата МТС панӑ счетсенче кӑтартнӑ чухлӗ парса татмалла. Тырӑ паракан килӗштернӗ тӑрӑх, ҫӳлте асӑнман ытти тӗштырӑсем вырӑнне кирек мӗнле урӑх культурӑсем те пама юрать; ҫу кӑлармалли культурӑсем енӗпе, кӑтартса панӑ эквивалент тӑрӑх, ҫу кӑлармалли пӗр йышши культура вырӑнне тепӗр йышши культура пама юрать.

7. Хӗвелҫаврӑнӑш тата ытти ҫу культурисем тӑратас енӗпе парӑмлӑ колхозсенчен, вӗсем 1942 ҫулта ҫу культурисем акман пулсан, ҫав культурӑсем вырӑнне тӗштырӑсем илме Наркомзага ирӗк парас, пӗр центнер ҫу культури вырӑнне пӗр центнер тӗштырӑ илмелле, вӗсен хакӗнчи уйрӑмлӑха колхозсене укҫан тӳлеттермелле.

8. СССР Наркомторгне тата Центросоюза ҫапла тума ирӗк парас: государствӑна памалли плана тултарас шутпа колхозсемпе совхозсенчен типӗтнӗ ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ, йӳҫӗтнӗ купӑста, хӑяр тата помидор илме юрать, вӗсене илес ӗҫе сельпосен ялти лавкисемпе склачӗсенче организацилемелле.

9. Союззаготтрансӑн автомашинисене ялхуҫалӑх продукчӗсене хатӗрлес ӗҫпе ҫыхӑнман грузсене турттарма ямашкӑн чарас, Союззаготтрансӑн 1941 ҫулти тырпула инҫетри пунктсенчен турттарас ӗҫре ӗҫлемен автомашинисене пурне те совхозсенчен тырӑ турттарма ямалла тӑвас. Союзсовхозтранс автомашинисене, совхозсен автомашинисене тата чӗрӗ туртӑм вӑйне совхозсен государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли планӗсене пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртсе ҫитиричченурӑх ӗҫсене яма чарас.

10. Союззаготтрансӑн тата совхозсенчен тырӑ турттарас ӗҫе туса тӑракан ытти организацисен счечӗсене малти черетпе. Союзсовхозтрансшӑн тунӑ йӗркепе тӳлесе тӑма СССР Госбанкне ирӗк парас.

11. СССР Совхозсен Наркоматне тырӑ усрама юрӑхлӑ складсене пӗтӗмпе 800.000 тонна зырнаҫмалӑх Наркомзага пама хушас; кайран вӗсенчи тырра совхозсен транспорчӗпе усӑ курса Заготзерно чугун-ҫул ҫинчи пунктӗсене турттарса тухмалла. СССР Совхозсен Наркоматӗн совхозӗсенче Наркомзагӑн вӑхӑтлӑха хатӗрлев пунктӗсем организацилемелле, ҫав пунктсене совхозсенчен 800.000 тонна тӗштырӑ илмелле. Тырра совхозсенчен турттарса тухиччен, Наркомзаг склачӗсен заведующийӗсем ыйтнӑ тӑрӑх, государство тыррине типӗтес тата тасатас ӗҫсене тума СССР Совхозсен Наркоматӗн кирлӗ рабочисемпе механизмсене памалла.

12. Наркоматсен совхозӗсемпе подсобнӑй хуҫалӑхӗсем, облаҫри (крайри тата республикӑри) хула таврашӗнчи совхозсен тресчӗсен, предприятисен, учрежденисен тата организацисен хуҫалӑхӗсем, вӗсем тӗштырӑ тата ҫу культурисем акнӑ пулсан, хӑйсем усӑ куракан ҫӗрӗн кашни гектарӗнчен, МТС-сем ӗҫлесе паракан колхозсемшӗн тунӑ обязательнӑй поставка нормисен ҫурри чухлӗ тӗштырӑ, рис, хӗвелҫаврӑнӑш тата ҫу культурисем памалла тӑвас, вӗренӳ заведенийӗсен подсобнӑй хуҫалӑхӗсене (20 гектартан ытла мар акнӑ пулсан), сывлӑха упракан заведенисен, ача яслисен, инвалидсемпе ватӑ колхозниксен сурчӗсен подсобнӑй хуҫалӑхӗсене государствӑна тырпул парассинчен хӑтараҫҫӗ.

Совхозсемпе подсобнӑй хуҫалӑхсене продовольстви валли уйӑрнӑ тӗштырра фураж вырӑнне расходлама, ҫавӑн пекех тата ытлашши тӗштырӑпа ҫу тумалли культурӑсен вӑрлӑхӗсене сутма, вӗсене ютра улӑштарма чарас.

13. Наркомзага ҫапла тума хушас: тырӑ склачӗсен строительстви тӗлӗшпе ӗҫ кая юлса пынине пӗтермелле, тырпула йышӑнма пуҫличчен 10 кун маларах элеваторсемпе хатӗрлев пунктӗсене пӗтӗмӗшпех хатӗрлесе ҫитермелле. Складсемпе механизациленӗ амбарсене, элеваторсемпе зерносушилкӑсене юсаса дезинфекцилесе ӗлкӗртмелле, тӗштырра татти-сыпписӗр йышӑнса тӑрас тата тырӑ паракансемпе вӑхӑтра расчетсем тӑвас тӗлӗшпе кирлӗ условисене пурне те туса йӗркелес тесе, хатӗрлев пунктӗсене тырӑ виҫмелли виҫесем, тырра тасатмалли хатӗрсемпе лаборатори инвентарӗсем тата тырӑ йышӑнмалли документсен бланкӗсем ҫителӗклӗ тарнах тупса памалла. Элеваторсемпе зерносушилкӑсене тырӑ йышӑнма пуҫличчен малтан вутӑ пӗр уйӑхлӑх запасран кая мар хатӗрлесе памалла.

———

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫапла шутлаҫҫӗ: ялти коммунистсемпе комсомолецсемшӗн, колхозниксемпе колхозницӑсемшӗн, МТС-семпе совхозсенчи работниксемшӗн, ялхуҫалӑх ӗҫӗсене явӑҫтарнӑ мӗнпур ҫынсемшӗн ялхуҫалӑхӗнчи татӑклӑ ӗҫсене вӑхӑтра туса ирттернӗ ҫӗре — уборкӑна хатӗрленес тата ӑна ӑнӑҫлӑн ирттерес ӗҫе, ҫапла вара ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫара ялхуҫалӑх продукчӗсем ҫителӗклӗ таран парас шутпа государство умӗнчи обязательствӑсене пурнӑҫлас ӗҫе мӗнпур вӑйсене мобилизацилессинчен пахарах та хисеплӗрех задача халӗхи вӑхӑтра урӑх ҫук.

Ҫак постановлени ялти партипе комсомол пухӑвӗсенче, колхозниксен, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисен, специалистсемпе служащисен пухӑвӗсенче сӳтсе явмалла, уборкӑна хатӗрленесе ирттерес тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ решенисем йышӑнса хӑвармалла.

Англи бомбардировщикӗсем Данцигпа Фленсбург ҫине вӗҫсе пырса тапӑнни

ЛОНДОН, июлӗн 12-мӗш. (ТАСС). Авиаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Данциг ҫине тапӑннипе пӗр вӑхӑтрах бомбардировщиксен ытти соединенийӗсем Фленсбургри подводнӑй лодкӑсен верфӗ ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Икӗ ҫӗрте те бомбӑсене ҫӳлӗ мар вырӑнтан пӑрахнӑ. Верфьре бомбӑсем ҫурӑлса кайни палӑрнӑ.

Америкӑн йывӑр бомбардировщикӗсем Англире

ЛОНДОН, июлӗн 12-мӗш. (ТАСС). Америка ҫарӗн Европӑри операцийӗсен штабӗ ҫакна кӑтартса парать: Англире Америка ҫарӗн аэродромне тунӑ, аэродром ҫинче ӗҫлекен ҫынсем те, оборудовани те Америкӑран килнӗ. Аэродромӑн «Вӗҫекен крепость» йышши йывӑр бомбардировщиксемпе «Бостон» йышши ҫӑмӑл бомбардировщиксем пур.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июлӗн 12-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июлӗн 12-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем **Воронеж** патне пымалли вырӑнсенче противника хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫнӑ.

Пирӗн войскӑсем **Кантемировкӑран** тухса кайнӑ, ҫапӑҫусем **Богучар** районӗнче пулса пынӑ.

Командовани хушнӑ тӑрӑх пирӗн войскӑсем **Лисичанск** патӗнчен ҫӗнӗ рубежсем йышӑнма чакнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Иртнӗ эрне хушшинче, июлӗн 5-мӗшӗпе 11-мӗшӗ хушшинче сывлӑшри ҫапӑҫусенче, аэродромсем ҫинче тата зенитнӑй артиллерирен персе, нимӗҫсен 583 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче пирӗн 225 самолет пӗтнӗ.

* * *

Июлӗн 11-мӗшӗнче пирӗн авиаци частӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 42 танкне, 3 бронемашинине, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 290 автомашинине, полевой артиллерин 8 туппине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, виҫӗ зенитнӑй батарейӑна пусарса лартнӑ, боеприпассен икӗ складне тата горючин икӗ складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине виҫӗ батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Воронеж патне пымалли вырӑнсенче хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Уйрӑм рубежсем темиҫе хутчен алӑран алла куҫаҫҫӗ. Пӗр участокра, С. ялӗ патӗнче противник пирӗн оборонӑна татма хӑтланнӑ. Нимӗҫсен атака тума тытӑннӑ танкӗсем мина хурса тухнӑ ҫӗре пырса кӗнӗ. Противникӑн виҫӗ танкӗ минӑсем ҫине пулса ҫӗмӗрӗлнӗ. Тӑшманӑн танкӗсем вӑхӑтлӑха пӑтрашса кайнипе усӑ курса, пирӗн артиллеристсем вӗсем ҫине пеме тытӑннӑ та тата 10 танка пӗтерсе тӑкнӑ. В. ялӗ патӗнче пулнӑ ҫапӑҫура нимӗҫсен 9-мӗш танковӑй дивизийӗнчи танковӑй полкӑн штабне аркатса тӑкнӑ. Секретлӑ паха документсем тытса илнӗ. Пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 9 самолетне персе ӳкернӗ тата ҫӗр ҫинче 55 автомашина, 6 бензоцистерна, 14 танк пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кантемировка районӗнче хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ хыҫҫӑн (ҫав ҫапӑҫусенче противника пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ) пирӗн чаҫсем ҫӗнӗ рубежсем патне чакнӑ. Ҫапӑҫусем ҫӗнӗрен вӑйлӑн пуҫланса кайнӑ. Нимӗҫсем темиҫе хут та атака тунӑ, ҫав атакӑсем вӑхӑтӗнче противникӑн 15 танкне ҫунтарса янӑ. Гитлеровецсен атакисене ҫине-ҫине сирсе пырса, пирӗн пӗр часть 4 орудин, 12 пулемет, 7 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ тата противникӑн 900 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ.

* * *

Лисичанск енче пирӗн войскӑсем, командовани хушнӑ тӑрӑх, оборонӑн ҫӗнӗ рубежне йышӑнма чакнӑ. Пирӗн ҫӗр ҫинчи войскӑсемпе авиаци пӗрле кӗрешсе, пӗр кун хушшинче нимӗҫсен темиҫе вуншар танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче пирӗн летчиксем противникӑн 12 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Унсӑр пуҫне, ҫар грузӗсем тиенӗ 100 автомашина ытла, 4 орудин тата 700 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн чаҫа ҫаврӑнса илме хӑтланнӑ противника хирӗҫ ҫаплах ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Вӑл ҫапӑҫусем халӑх пурӑнакан пӗр пунктӑн районӗнче уйрӑмах ҫивӗчленсе кайнӑ, ҫав пункт вӑл икӗ хутчен алӑран алла куҫнӑ. Сазонов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн боецсем ӗнер ҫутӑласпа ҫав пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗҫсем, вилнисене ҫеҫ шутласан та, темиҫе ҫӗр салтакпа офицера ҫухатнӑ.

* * *

Васильев юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫри снайперсем (Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗ) юлашки 10 кун хушшинче 500 гитлеровеца ытла стройран кӑларнӑ.

Старши сержант Лагутин противникӑн тылӗнче нимӗҫ салтакӗсен пӗр ушкӑнне тӗл пулса, 10 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр нимӗҫ салтакне Лагутин юлташ тыткӑна илсе хамӑр чаҫа пырса панӑ.

* * *

Серебряков юлташӑн подразделенийӗнчи пилӗк бомбардировщик противникӑн аэродромӗ ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ, нимӗҫсен 8 истребительне пӗтерсе тӑкнӑ, 7 истребительне сиенленӗ.

* * *

Минск облаҫӗнче кӗрешекен белорусс партизанӗсен отрячӗ противникӑн войскӑсемпе техникине турттаракан 6 поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫусенче совет патриочӗсем иртнӗ уйӑхра нимӗҫсен 330 салтакӗпе 77 офицерне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Харьковра гитлерла ирсӗрсем нумаях пулмасть йывӑр аманнӑ 30 красноармеецпа командира Лысая текен ту ҫине илсе пынӑ та унта вӗсене юпасем ҫумне ҫыхса лартнӑ. Нимӗҫ офицерӗсем ҫавӑнта хӑйсен салтакӗсене штыкпа ҫапӑҫма пӗр сехет хушши вӗрентнӗ. Фашистла ирсӗрсем юпасем ҫумне ҫыхса хунӑ тыткӑнри красноармеецсене пӗрин хыҫҫӑн теприне штыкпа чикнӗ.

Июлӗн 13-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳрен

Июлӗн 13-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ **Воронеж** патне пымалли вырӑнсенче тата **Богучар** районӗнче ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Воронеж патне пымалли вырӑнсенче ҫаплах вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсем пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Халӑх пурӑнакан пӗр пунктшӑн ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра Аникушкин юлташ командир пулса тӑракан часри танкистсем танксене хирӗҫ пемелли 17 орудие расчечӗсемпе пӗрлех тата 15 пулеметпа 3 миномет пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 300 ҫынна ҫити вӗлернӗ. Лукичев лейтенант командир пулса тӑракан артиллери батарейин позицийӗ ҫине нимӗҫ пехоти тапӑнса пынӑ. Ӑна ҫывӑхах ярса, артиллеристсем ун ҫине пеме тытӑннӑ та гитлеровецсене сапаласа янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн ҫӗрӗшер вилли выртса юлнӑ.

* * *

Богучар районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн наступлени тӑвакан чаҫӗсене хирӗҫ оборонӑллӑ йывӑр ҫапӑҫусем туса пынӑ. Пӗр участокра пирӗн чаҫсем гитлеровецсен пирӗн оборонӑна шала кӗрсе кайнӑ пысӑк отрядне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра противникӑн 5 танкне тата 350 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Лисичанскран ҫӗнӗ рубеж йышӑнма чакнӑ чухне пирӗн чаҫсем противникӑн танкӗсемпе пехотине хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Пӗр участокра нимӗҫсем пирӗн позицисене темиҫе хутчен атакӑланӑ. Йышӑннӑ рубежа хӳтӗлесе тӑрса, пирӗн боецсем тӑшманӑн войскисене пысӑк ҫухатусем тӳстереҫҫӗ. Нимӗҫсен пӗр ҫапӑҫурах 9 танк тата 250 салтакпа офицер ытла пӗтнӗ. Тепӗр участокра танксен вӑйлӑ ҫапӑҫӑвӗнче нимӗҫсен 35 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

Кузнецов юлташ командир пулса тӑракан часри танкистсем (Калинин фрончӗ) противникӑн пехотипе танкӗсене хирӗҫ темиҫе сехет хушши вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫсем йышлӑрах пулнӑ пулсан та, вӗсем пирӗн боецсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрме пултарайман. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 600 ҫынна ҫити вилсе тата аманса юлнӑ. Нимӗҫсен виҫӗ танкне, икӗ орудине тата темиҫе автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Кӗҫӗн лейтенант Романенко тата политрук Демчук ертсе пыракан разведчиксем противникӑн траншейисене ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ. Штыксемпе тата гранатӑсемпе ҫапӑҫса, пирӗн хӑюллӑ боецсем 35 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, винтовкӑсем тата икӗ пулемет тытса илнӗ.

* * *

Ленинград облаҫӗнчи партизансен Т. юлташ ертсе пыракан отрядӗнчи ҫынсен ушкӑнӗ противникӑн 2 ҫар эшелонне крушени тунӑ. Партизансен темиҫе отрячӗ, Б. тата К. юлташсем командирсем пулса ертсе пынипе пӗрлешнӗскерсем, тӑшманӑн гарнизонӗсем ҫине тапӑна-тапӑна тата засадӑсенчен персе, виҫӗ кун хушшинче нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене 80 ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 258-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 458-мӗш полкӑн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Гюнтер Клютер ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ Америкӑра, Нью Йоркра пурӑннӑ. 1939 ҫулта ҫулла Германие килтӗм. Вӑрҫӑ пуҫлансанах мана лагере тытса хупрӗҫ, 1942 ҫулти апрельре вара Хӗвелтухӑҫ фронтне ячӗҫ. Манӑн ҫемье Америкӑра пурӑнать, манӑн уншӑн пӑшӑрханмалли ҫук. Эпӗ хам мӗн шухӑшланине уҫҫӑнах калама пултаратӑп. Гитлерла режимпа фашистла пропаганда нимӗҫсене хӑратса, ухмахлантарса, пӑсса пӗтернӗ. Эпӗ хам сӑнани ҫакна кӑтартать: нимӗҫ салтакӗсенчен чылайӑшӗ чӑн-чӑн ҫаратуҫӑсемпе вӑрӑ-хурахсем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем ҫын сӑнне йӑлтах ҫухатнӑ ӗнтӗ; ҫаратассипе вӗлерессипе вӗсен хӑнӑхнӑ ӗҫӗ пулса тӑнӑ. Салтаксен чылай пысӑк сийӗ — карьеристсем. Тимӗр хӗрес е унтер-офицер чинне илмешкӗн вӗсем темле ирсӗр ӗҫ те тума хатӗр. Салтаксене ҫапла каласа ӗнентернӗ: вӑрҫӑ пӗтсен Германия пӗтӗм тӗнчере пуҫ пулса тӑрать, вӑрҫӑра хӑйне палӑртнӑ кашни салтак вара оккупациленӗ районсенче ответлӑ та тупӑшлӑ вырӑн йышӑнать, тенӗ. Салтаксенчен пӗр ушкӑнӗ гитлерла йӗркене кураймасть, вӑл вӑрҫӑшӑн мар, анчах та вӑл халлӗхе нимӗн тума та пултараймасть-ха».

* * *

Гитлерла юнлӑ террор Норвегире ӳснӗҫемӗн ӳссе пырать. Нумаях пулмасть нимӗҫсем Телемерк ялне пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ, ҫав ял ҫыннисене, вӑл шутра хӗрарӑмсемпе ачасене те, пурне те персе вӗлернӗ. Юлашки вӑхӑтра пиншер норвежеца арестлесе тӗрмене хупнӑ. Анчах, апла пулсан та, норвежец-патриотсем оккупантсене хирӗҫ ҫаплах пӗр чарӑнмасӑр кӗрешеҫҫӗ. Хӗҫпӑшаллӑ тытӑҫусенче Ставангерта, Бергенра, Тронхеймра тата ытти хуласенче нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене темиҫе ҫӗр ҫынна вӗлернӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропогандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 178 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 4. 58 х 84 п. л.